*«Ылтăн Зинаидăна - ыр сунса...»*

**Çакнашкал хак панă Зинаида Федоровна Оферкинăна, Чăваш наци библиотекин документсене каталога пухакан тата фонд йĕркелекен центрăн тĕп библиотекарьне тĕнчипе паллă чăваш сăвăçи Геннадий Айхи сăвă кĕнекине алă пусса парнеленĕ май.** Хăть камшăн та, уйрăмах кĕнекен чăн пахалăхне пĕлекеншĕн, çак пулăм тĕлĕнмелле ытарлă та манăçми. "Маншăн чи пĕлтерĕшли - эпĕ хамăн ĕçе сума суни, юратни, пĕлни, хисеплени. Кашни кĕнеке - чун киленĕвĕ. Эпĕ аллăмра миçе пин кĕнеке тытман-ши? Библиотека фондне пуянлатас тесе, вулакансене тĕрлĕрен-тĕрлипе тивĕçтерес тесе чун-чĕре вăйне шеллемесĕр тăрăшатăп. Урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен эпĕ килес ăрусен умĕнчи яваплăха çивĕч туятăп", - тет Зинаида Федоровна. Вăл пурнăçлакан ĕçе тивĕçлипе хакласа библиотекăра ырми-канми нумай çул тăрăшнăшăн çак кунсенче З.Оферкинăна Раççей Федерацийĕн Культура министерствин Хисеп грамотипе чысланă.

...Тепĕр чух килти библиотекăри кĕнекесене алла тытсан ку е тепĕр çыравçăн халалласа, пехиллесе çырнă сăмахĕсене вуласан чунра ăшă-ăшă пулса каять, чĕрене савăнăç тултарать. Иртсе кайнă манăçми самант кĕтрет пекех куç умне тухса тăрать. Пуранна чух ентешĕм Геннадий Айхи мана та хăйĕн хайлавĕсен пуххине "Шурă чечеке - Альбинăна" тесе автограф лартса панăччĕ. Зинаида Федоровна вара ун йышши вилĕмсĕр кĕнекесене пинĕ-пинĕпе пухнă, халĕ те çак пархатарлă ĕçе ĕçтешĕсем хушнипе çеç мар, чун ыйтнипе пурнăçлать.

Хальхинче Наци библиотекинче тăрăшуллă библиотекарьпе курнăçас тесе ятарласа кĕтĕм. "Кама кирлĕ халь кĕнекесем? Юлашки çулсенче вĕсен пĕлтерĕшĕ самаях чакрĕ. Эпир, çыравçăсем, çырма çыратпăр-ха, анчах та çулсерен сутма йывăрлансах пырать. Çамрăксем вĕсене вуламаççĕ, чылай чух пушă вăхăта Интернетра ирттереççĕ, ашшĕ-амăшĕн вăхăт çук, укçа ĕçлесе илмелле, ватăсем хутран ситрен уçкаласа пăхсан çеç", - пăшăрханса пуçларăм калаçăва. Хăй манпа килĕшменнине систерсе Зинаида Федоровна пуçне сулласа илчĕ. "Кĕнекесене малтанхи пекех вулаççĕ. Çамрăксем вулав залĕсенчен тухма пĕлмеççĕ. Енчен те ĕлĕкрех чылай кĕнекене Наци библиотекинче çеç тупса вулама май пулнă пулсан халĕ, самани улшăннă хыççăн, вĕсене вĕренӳ заведенийĕсене çĕр-çĕр экземпляр валеçсе параççĕ. Çапах та сирĕнпе килĕшесех пулать: илемлĕ литературăна сахалрах вулаççĕ, - хăй шухăшне пĕлтерчĕ вăл. - Маншăн ĕç яланах питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнă. Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен эпир хамăрăн пурнăçăн пысăк пайне ĕçре ирттеретпĕр, çыннăн кăмăл-сипетне вара юратнă ĕç çеç çырлахтарма пултарать". Зинаида Федоровнăн хăй шутласа тупнă ĕç формули те пур. Акă вăл: ырăлăх, кăмăллăх, принциплăх, хăвăнтан тата çынсенчен ыйтма пĕлни, тăван тăрăха, культурăна, ĕçе, халăха тата çынсене чун-чĕрепе парăнса тăрăшни. Ун шухăшĕпе, çак формулăна пурнăçа кĕртсен хăвна чăн-чăн профессионал теме пултаратăн.

Тăван çĕр-шыва, халăха, чĕлхене юратма, суйласа илнĕ çулпа айккинелле пăрăнмасăр утма кам вĕрентнĕ-ха ăна? Паллах, чи малтан ашшĕпе амăшĕ Федор Алексеевичпа Людмила Вениаминовна. Çамрăк мăшăр ял хуçалăх институчĕн дипломне илнĕ хыççăн направленипе Удмурт Республикине ĕçлеме кайнă. Часах çемье ачасемпе пуянланнă. Пĕчĕк Зинăпа унăн шăллĕ Сергей пĕр харăс виçĕ чĕлхепе калаçма вĕреннĕ: вырăсла, чăвашла тата удмуртла. Тепĕр чух ашшĕ-амăш вĕсен вăрттăнлăхне ан ăнланччăр тесе хăйсен хушшинче удмуртла калаçнă. Ял хуçалăхĕнче агрономра тăрăшнă ашшĕн шкул çумĕнче хăйĕн ятарлă çĕр лаптăкĕ пулнă, унта вăл тĕрлĕ пахча çимĕç çитĕнтернĕ. Çĕр ĕçĕн чăн хакне шăпăрлансем ашшĕпе юнашар вăй хунă чух ăнкарса илнĕ. Ахальтен мар пуль çав паян Зинаида Федоровнăн хĕрĕ педагогика университетĕнче биологи факультетĕнче ăс пухать. Кукашшĕ çут çанталăка юратни ун урлă мăнукне куçни куç кĕрет.

...Удмурт çĕрĕнче тымар яма ĕлкĕрнĕ Оферкинсем ашшĕ-амăшне ватлăхра пĕчченлĕхре хăварас мар тесе тăван тăрăха - Çĕмĕрле районĕнчи Речной поселока - таврăннă, вĕрентекенсем пулса тăнă. Ун чух поселокра 28 наци çынни пурăннă. Мĕн ачаран тĕрлĕ халăх чĕлхисене итлесе çитĕннĕ хĕр пĕрчи. Çак аслă тĕнчен хăйне евĕрлĕхне

ăнкарса ӳснĕ. Çавăн чухнех вăл тăван чăваш чĕлхин хакне те туйса илнĕ. Аттестат илнĕ хыççăн тухтăра вĕренме хатĕрленнĕскерĕн шухăш-кăмăлне çемье тусĕ - Тăванкасси ял канашĕн ертӳçи Сергей Пихтеров - улăштарнă. “Ялти библиотекăра ĕçлесе пăх-ха, тен, ку професси сана килĕшĕ”, - сĕннĕ вăл. Часах Çĕмĕрле район библиотекин директорĕ Клавдия Белова, хĕр пултарулăхне витĕр курса тăнăскер, ăна ятарлă пĕлӳ илме сĕннĕ. Вăл аслă ĕçтешĕн ăслă канашне тăнланă, ĕçленĕ вăхăтрах Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищинче библиотека факультетĕнче ăс пухма тытăннă. Хусантан патшалăх экзаменне тыттарма килнĕ пĕр профессор ăна Хусан патшалăх культура институтĕнче аслă пĕлӳ илме сĕннĕ. “Библиотекарь профессийĕ - манăн шăпа, - тет иртнĕ кунсене çĕнĕрен таврăннă май Зинаида Федоровна. - Мана çак çулпа темле хăватсем ятарласа ертсе пынăнах туйăнать тепĕр чух”.

...Пĕр пытармасăр каласан эпĕ Зинаида Федоровнăна кăштах ăмсанатăп та. Вăл хăйĕн пурнăçĕнче вун-вун çыравçăпа куçа-куçăн калаçса курнă. Никам илтмен шухăшсене илтсе тĕлĕннĕ. Ĕçе пула вăл тулай чăвашсем патĕнче те - Тутарстан, Пушкăртстан, Мускав, Сарă ту, Самар, Чĕмпĕр - пĕрре мар пулса курнă, унти лару-тăрупа паллашнă, вырăнти библиотекăсене кирлĕ кĕнекесемпе тивĕçтернĕ. “Кĕнекесемпе ĕçленĕ чух манăн чун яланах вĕçевре. Хамăн ирĕкпе эпĕ “Раççей çăл куçĕсем” фестивале 15 çул хутшăнтăм. Эпĕ хамăн пурнăçăн кашни самантĕнче обществăшăн тата çынсемшĕн пурăннă, пурăнатăп та. Пĕр чăнлăха питĕ аван ăнлантăм. Ачана кĕнекене юратма вĕрентме чи малтан çемьере пуçламалла, ку ĕçе шкул та, университет та, библиотекăсем те кирлĕ чухлĕ пурнăçлаймаççĕ. Пĕр тĕслĕх çеç. Эпĕ хĕрĕме кĕнекесен пĕлтерĕшне мĕн пĕчĕкрен ăнланма пулăшнă. Эпир унпа иксĕмĕр тем тĕрлĕ кĕнеке те вуланă, юмахран пуçласа çут çанталăка упрама вĕрентекенни таранах. Пĕррехинче 5 çултискерне ача садĕнчен киле илсе килетĕп. Троллейбуса улăхра ӳсекен чечексен тем пысăкăш çыххине йăтнă хĕрарăм кĕчĕ. Ман хĕрĕм чăтса тăраймарĕ, ун патне пычĕ те: “Эсир мĕншĕн çавăн чухлĕ чечек татнă, пĕр-ик чечек татнипе çырлахмарăр-им, пĕлетĕр-и, мĕн чухлĕ чечек хăй вăррине çĕре тăкаймасть, çавна пула тепĕр çул мĕн чухлĕ чечек ӳссе çитĕнеймест”, - терĕ. Çав самантра пĕчĕк ачан шухăшлавĕнчен палламан çынсем çеç мар, хам те тĕлĕнтĕм. Акă вăл пĕлӳ панă кĕнекен чăн усси. Хаçат вулаканĕсене çакна калассăм килет: çак тĕнчене мĕн чухлĕ нумайрах юрату, ăнлану, ытарлă кулă, чун ăшши паратпăр, вĕсем пирĕн пата каялла ырă вăй, телей, çĕкленӳллĕ кăмăл пулса таврăнаççĕ. Манса ан кайăр, Наци библиотекин алăкĕсем пурин валли те уçă. Килĕр, пирĕн патăмăрта çĕнĕ информаци, çĕнĕ туйăмпа шухăш пухăр, пурте пĕрле çак тĕнчене тасарах та çутăрах тăвăпăр”, - тет Зинаида Федоровна.

***Юрату, А. «Ылтăн Зинаидăна - ыр сунса...» / Альбина Юрату // Хыпар. – 2012. - 14 января.***